

# МЕДИА – пирĕн чунра

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.
Авторĕ – Светлана Чикмякова



## «Артек» малалла талпăнма çунат хушрĕ

Вăрнар округĕн шкулĕсенче тĕрлĕ юхăмсем аван ĕçлеççĕ. Вăл шутра – медиаклассем те. Вăрнарти 2-мĕш шкулта та вĕренекенсене хаçат чĕлхипе, социаллă сетьсен вăрттăнлăхĕпе туслаштараççĕ. Ку енĕпе хастарлăх кăтартакансенчен пĕри – 9-мĕш класа куçнă Дарья Семенова. Тăрăшулăхне пула вăл май уйăхĕнче пĕтĕм тĕнчери «Артек» лагерьте канма тивĕçрĕ. Паян ăна сăмах.

**Çу уйăхĕ маншăн чăннипех те асра юлмалли самантсемпе пуян пулчĕ. Эпĕ ăна республикăри 32 шкул ачипе пĕрле чи паллă, чи интереслĕ пĕтĕм тĕнчери «Артек» ача-пăча центрĕнче ирттертĕм. Эпир «Лесной» ятлă лагерьте кантăмăр. Каласа хăвармалла, кашни лагерĕн тумĕ уйрăм тĕслĕ: хĕрлĕ, кăвак, сарă хĕрлĕ, хĕрлĕ-кăвак. Пирĕн – симĕс. Çавăнпа та хамăр лагерьти ачасене ыттисем хушшинче çăмăллăнах паллама пулатчĕ.**

Чи малтанах пире профильлĕ отрядсем çине (медиксем, археологсем, туристсем, футболистсем тата ыт.те) уйăрчĕç. Эпĕ педагогсен ушкăнне лекрĕм, вĕрентекен профессийĕн пĕрремĕш хăнăхăвĕсемпе паллашрăм. Смена вĕçнелле ытти лагерьсенчи çак профильлĕ отрядсемпе «Педагогсен çапăçăвне» те хутшăнтăмăр. Ку маншăн хăйне май интереслĕ опыт пулчĕ.

Курмалли, пĕлмелли чăннипех те нумай. Пĕрремĕш кунсенчех эпир лагерь историйĕпе, аталанăвĕпе паллашма «Артек» музейĕнче пултăмăр. Çавăн пекех лагерь территорийĕнче вырнаçнă Тинĕс-çар музейĕн экспоначĕсене те интересленсех тишкертĕмĕр. Вĕренӳ пирки те манмарăмăр. Эрнере темиçе кун шкула (архитектурăри пĕрпеклĕхе пула ăна «Хогвартс» тетчĕç) занятисене çӳрерĕмĕр. «Гарри Поттер» фильмри пекех кунта темĕнле хăйнеевĕрлĕ асамлăх хуçаланать тесен те йăнăш пулмĕ. Пысăк çуртра çухалса кайма та инçе мар.

Ытти кунсенче вара вĕренӳ модулĕсем Ливадий, Воронцов, Суук-Су керменĕсенче экскурси йĕркипе иртрĕç. Севастополь герой хулинче Крым тата Хура тинĕс флочĕн пуян историйĕпе тĕплĕн паллашрăмăр, ытти паллă вырăнсене те курса çӳрерĕмĕр.

5-мĕш смена «Славе не меркнуть, традициям жить» ятпа иртрĕ. Пĕтĕм мероприяти Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи совет халăхĕн паттăрлăхне астуса ăруран ăрăва хăварас тĕллевпе тулчĕ. «Георгий хăйăвĕ», «Çĕнтерӳ чӳречисем», «Асăну сачĕ» акцисене, флешмобсене эпир активлă хутшăнтăмăр, ветерансемпе тĕл пулса калаçрăмăр, вăрçăра пуç хунă Геройсен ячĕсене аса илтĕмĕр, вăл вăхăтри артековецсен паттăрлăхĕ пирки пĕлтĕмĕр, асăну обелискĕ патне чĕрĕ чечексем хутăмăр.

«Фронтри полигон» программа чĕрере уйрăмах тарăн йĕр хăварчĕ. Отрядпа пĕрле тĕрлĕрен станцисем тăрăх çӳрерĕмĕр: пĕринче вăрçă çулĕсенчи юрăсене хавхаланса юрласа ташларăмăр, тепринче автоматсене салатса пуçтартăмăр, тата тепринче пире салтак пăттипе тата вĕри чейпе хăналарĕç. «Артекри» Çĕнтерӳ кунĕн уявĕ хăйĕн анлăшĕпе тĕлĕнтерчĕ. Май уйăхĕн 9-мĕшĕнче иртнĕ митинг-концерта тата «Вилĕмсĕр полк» акцие Раççейри тата ют çĕршыври виçĕ пин ытла ача хутшăнчĕ. Çумăрлă çанталăк та хавхаланullă кăмăл-туйăма пăсаймарĕ. Смена тăршшĕпе ирттерекен ăсталăх конкурсĕсем те вăрçă тематикипе çыхăнчĕç. Палăртма кăмăллă, отрядпа пĕрле «Юрăсем те çапăçнă» музыка конкурсĕнче тата театрализациленĕ ташă фестивалĕнче призлă вырăнсем йышăнтăмăр.

Кашни кун тĕрлĕрен мероприятипе, интереслĕ мастер-классемпе пуян пулчĕ. Чи пĕлтерĕшлисенчен пĕри, паллах – Чăваш ен Пуçлăхĕпе Олег Алексеевич Николаевпа курса калаçни. Вăл «Артек» ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма килесси пирки пире малтанах пĕлтерчĕç. Çак кун маншăн питĕ хумханullă иртрĕ.

Чи малтанах пире, Чăваш енри 11 ачана, «Артек» столовăйне чăвашсен кукăльне – хуплу – пĕçерме вĕрентекен мастер-класа чĕнчĕç. Эпир хамăра чăн-чăн поварсем пек туйрăмăр. Тăрăшни сая каймарĕ, кăмакаран икĕ тутлă хуплу пиçсе тухрĕ. Пĕрне эпир кăмăлласах астиврĕмĕр.

Олег Алексеевичпа эпир пысăк залра тĕл пултăмăр. Унпа пĕрле Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕн министрĕ Владимир Степанов, физкультурăпа спорт министрĕ Василий Петров тата ытти хăнасем пулчĕç. Пирĕнтен кашниех хăйĕн вĕренӳри, спортри, культурăри çитĕнĕвĕсемпе, пултарулăхĕпе паллаштарчĕ. Тĕпрен илсен, калаçу ачасен канăвĕ пирки пычĕ. Олег Алексеевич пирĕн республикăра ĕçе кĕрекен «Губернатор лагерĕ» проект пирки каласа кăтартрĕ. Вăл Сĕнтĕрвăрри округĕнчи «Белые камни» лапамĕнче уçăлчĕ ĕнтĕ. «Кăçал виçĕ смена йĕркелесшĕн, унта 1300-е яхăн ача канма пултарĕ. Паллах, «Артек» опытне, методикине, чи лайăх традицийĕсене тĕпе хурса вăл ачасен канмалли республикăри чи лайăх вырăнĕ пулса тăрасса шанатпăр», – терĕ Олег Алексеевич.

2020 çулта эпĕ «Белые камни» лагерьте 2-мĕш сменăра каннăччĕ. «Çĕнĕлĕхсене вăя кĕртсен унта тепĕр хут пулса курмаллах!» – терĕм.

Эпир Олег Алексеевича хамăра кăсăклантаракан ыйтусене патăмăр. Лагерьте ирттерекен мероприятисене активлă хутшăннине палăртрăмăр. Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе «Артекра» калаçни мана тата та хастартарах, тăрăшуллăрах, пуçаруллăрах пулма хавхалантарчĕ тесе шутлатăп.

Кашни артековецшăн асра юлмалли самантсенчен пĕри вăл, паллах, Аю-Даг е Упа тăвĕ çине хăпарни. Ир-ирех тăрса апатланнă хыççăн автобус пире ту никĕсĕ патне илсе çитерчĕ. Чи малтанах инструктор хăрушсăрлăх правилисемпе паллаштарчĕ. Упа тăвĕ пирки калакан легендăсене итлеме те кăсăклă. Нумай çул хушши «Артекра» çак вырăнпа çыхăннă йăлайĕрке çирĕпленнĕ. Ту тăрне хăпарас умĕн кашни ача пĕчĕк чул катăкки илсе чи çутă ĕмĕчĕ пирки шутлать. «Упа çурăмĕ» çине хăпарса çитсен пысăк чулсем тавра çаврăнса пĕчĕккине кунта хăварать, ĕмĕчĕ пурнăçланасса шанать. Шăпах çак ту тăрринче шкул ачисем тупа тăваççĕ, вĕсене артековецсен ретне илеççĕ. Çăмăл мар çула парăнтарнă хыççăн пире кунта пурăнакан хĕрлĕ çӳçлĕ Абсолют старик кĕтсе илчĕ, унпа пĕрле хаваслă юрăсем юрларăмăр. Кам-ха вăл? Абсолют – шăплăха упракан йĕрĕх тавраш. «Артек» лагерьти канмалли вăхăта 20-мĕш ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенченех абсолют теççĕ. Эппин шавлама, айкăшма юрамасть.

Аю-Даг тăрринчен вара ытарайми илемлĕ ӳкерчĕк чуна савăнтарчĕ: вĕçĕ-хĕррисĕр кăвак тинĕс, «Артек» лагерь те ал тупанĕ çинчи пек. Сывлăшĕ тата мĕне тăрать! Сăмахпа каласа та кăтартаймăн! Пулса, çитсе курмалла!

Смена иртнине сиссе те юлаймарăм. Тĕрлĕрен экскурсисем, ăсталăх конкурсĕсем, спорт ăмăртăвĕсем... Кашни кун мĕн те пулин çĕнни, тĕлĕнмелли пулчĕ.

Акă уйрăлмалли вăхăт та çитрĕ. Кашни смена хыççăн «Артек Аренăна» мĕнпур лагерьти (вĕсем «Артекра» тăххăр) ачасем уйрăлу умĕнхи тĕлпулăва пухăнаççĕ. Пирĕншĕн вăл питĕ хумханullă иртрĕ. Нумайăшĕн куçĕсем шывланчĕç. Арçын ачасем кашни хĕрачана асăнмалăх кĕлчечек парнелерĕç. Хăшпĕриншĕн «Артекри» смена юлашки пулчĕ. Вĕсем çул çитнине кура кунта урăх канаймĕç. Тен, ĕçлеме килĕç... Артековецсем пĕр-пĕрне, вожатăйсене тата педагогсене ăшă сăмахсем каларĕç, тав турĕç.

Сцена çинче патриотизм темипе çыхăннă «Живой» ятлă музыка спектаклĕ кăтартрĕç. Ăна тата пĕтĕм программăна онлайн форматпа ачасен ашшĕ-амăшĕсен, тăванĕсен те курма май пулчĕ. Вĕсем те пирĕнпе пĕрле савăнчĕç, çав вăхăтрах уйрăлмалли самант çитнишĕн кулянчĕç.

«Артековец паян, артековец яланах» тени сменăри кашнин чĕринче çирĕп вырнаçрĕ. «Артекра» пулнă кашни ача кунта тепĕр хут килме ĕмĕтленет. Мĕншĕн тесессĕн лагерьте ирттернĕ кунсем ачалăхри чи çутă, чи савăнăçлă, чи интереслĕ вăхăт тесе çирĕплетсех калама пулать. Вĕсем нихăçан та манăçмаççĕ. Кунта кашниех хăйĕн талантне, пултарулăхне уçма пултарать.

Эпĕ çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчи, ют çĕршыври (пирĕн сменăра пĕрле Сири ачисем канчĕç) ачасемпе паллашса тус-юлташсем тупрăм. Паян та эпир пĕр-пĕринпе çыхăну тытатпăр, пĕрле тепĕр хут тĕл пуласса шанатпăр.

Эппин тата ытларах тăрăшмалла, лайăх паллăсемпе вĕренсе, спорт ăмăртăвĕсене, шкул пурнăçне, округ, республика, Раççей шайĕнчи олимпиадăсемпе конкурссене активлă хутшăнса, пĕрремĕшсен ретĕнче пулса Хисеп хучĕсене, медальсене тивĕçмелле. Мĕн чухлĕ нумайрах, çавăн чухлĕ ĕмĕт патне çывăхрах. Кашни маттур, хастар, пултаруллă ачан «Артек» лагере çитсе курма май пур. Хăрамалла мар, хăвăра шанмалла!

**Дарья СЕМЕНОВА,**
**Вăрнарти 2-мĕш шкулта вĕренекен**

Тема тăсăмĕ 4-мĕш стр.



О.Николаевпа пĕрле.



Обелиск умĕнче.




Мастер-класра.

**Медиа – пирĕн чунра** Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

# Ҫĕршер пултаруллă ҫамрăка пĕрлештернĕ

**Ачасене хăйсен чунри туртăмĕсене, тĕрлĕ енлĕ пултарулăхне аталантарма майсем туса пани питĕ аван. Пĕтĕм Раççейри «Включайся!» фестиваль те, акă, ҫамрăксене медиасфера «тĕнчине» илсе кĕрет, вĕсен тавракурăмне пуянлатать, пултарулăхри ĕмĕт-тĕллевĕсене пурнăҫа кĕртме пулăшать.**



*Фестивале хутшăннă чăваш ачисем.*

Ача-пăча медиаушкăнĕсене пĕрлештерекен ку фестиваль кăҫал 18-мĕш хут иртнĕ ĕнтĕ. Палăртмасăр май ҫук, ҫак пысăк тапхăрта вăл ҫамрăк тусĕсен юратăвне те, авторитетлă профессионалсен хисепне те ҫĕнсе илнĕ. Хальхинче те медиауяв ҫĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи 800 енне арҫын ачапа хĕрачана пĕр шухăшпа, пĕр вырăнта – Мускаври «Останкино» киноконцерт залĕнче – пухнă.

Ҫак йышра Чăваш енĕн ҫамрăк телевидени ăстисем те пур. Республикăра паллă «Куча-мала» ушкăнăн та фестиваль пурнăҫне туллин явăҫма, ҫак асамлă атмосферăна туйма май пулнă. Медиаĕҫри ҫĕнĕлĕхсем, пĕлтерĕшлĕ вăрттăнлăхсем, тĕрлĕ регионти тантăшĕсемпе хутшăнни... – ҫак виҫĕ кун ачасемшĕн пĕр самант пекех иртсе кайнă.

Курмалли-вĕренмелли вара чăнах та чылай пулнă. Телевидени профессионалĕсем ку ĕҫре малтанхи утăмсене тăвакан ҫамрăк тусĕсене тĕрлĕрен мастер-классенче хăйсен опычĕпе паллаштарнă: ăнăҫлă проектсем йĕркелессипе, интереслĕ видеороликсем ӳкерессипе, монтаж вăрттăнлăхĕсем тĕлĕшпе... Тата ҫăлтăрлă хăнасемпе – паллă актерсемпе, режиссерсемпе, журналистсемпе – тĕл пулса калаҫни те мĕне тăрать!

Чăваш енри «Куча-мала» медиакоманда хастарĕсем, акă, Пĕрремĕш канал, «Пятница», Disney валли хатĕрлекен проектсен режиссерĕ, продюсерĕ Александр Дибривный монтаж мелĕсене вĕрентни питĕ усăллă пулнине палăртаççĕ. Унсăр пуҫне «Модный приговор» тата «Лучше всех» проектсен стилисчĕн Евгения Артемьеван мастер-класĕнчи сĕнӳсем те ведущисене кадрта илемлĕ курăнма пулăшĕҫ.

Телĕнмелле те, кĕске вăхăтрах, ансат япаласемпех стилистсем кашни ҫыннăн сăн-сăпатне улăштарма пултараççĕ иккен. Ачасен, чăн та, медиауяв парнеленĕ ырă туйăмсен вĕҫĕ-хĕрри те ҫук.

Ҫавăн пекех палăртмалла, фестивале Раççейри 148 хуларан 326 студи 587 ĕҫ тăратнă. Вĕсене тĕрлĕрен номинацисенче тишкернĕ. «Куча-мала» ушкăнăн ĕҫне те профессионаллă жюри пысăк хак панă.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**

---

**Вăрнарти 2-мĕш вăтам шкулта ачасене ҫыру ăсталăхне вĕрентессипе «Тăван ен» кружок ĕҫлет. Ертӳҫи – Вероника Трифоновна Дмитриева. Сире 6-мĕш класа куҫнă ачасен ĕҫĕсемпе паллашма сĕнетпĕр.**

## Асанне патĕнче



Манăн асанне ялта пурăнать. Унăн икĕ кушак пур. Пĕри Никиса ятлă, тепри – Муся. Вĕсем выляма тата урамра чупма юратаççĕ.

Эпĕ канмалли кунсене асанне патне каятăп. Ăна тĕрлĕ ĕҫ туса пулăшатăп. Пушă вăхăтра туссемпе урамра вылятăп. Кушаксене сĕт, пулă ҫитеретĕп. Вĕсене эпĕ питĕ юрататăп.

**Сергей МАКСИМОВ**

## Аппа парнелерĕ

Мана ҫуралнă кун ячĕпе аппа йытă ҫури парнелерĕ. Эпĕ ăна Тейзи ят хутăм. Вăл пĕчĕкскер, хитрескер. Эпĕ ăна сĕт ярса патăм.

Кайран аттепе пĕрле Тейзи валли йытă йăви турăмăр. Вăл ăна питĕ килĕшрĕ.

Йытă ҫури хăвăрт ӳссе кайрĕ, манран та пысăкрах вăл, питĕ хытă чупать.

Тейзи – ман ҫывăх тус. Аппана ҫакăн пек парнешĕн хыттăн тав тăватăп.

**Андрей ИЛЬИН**

## Манăн йытă

Пирĕн класс питĕ туслă. Уроксем интереслĕ, кăсăклă иртеççĕ. Эпĕ хамăн йытă ҫинчен каласа парасшăн.

Пирĕн килте йытă пур. Вăл Князь ятлă. Князь пысăк, хĕрлемес тĕслĕ, ҫăмламас. Йытă питĕ аш юратать. Тата манăн тус пĕчĕк ачасемпе выляма кăмăллать, вĕсем ҫине вăл вĕрмест.

Ҫавăн пекех килте кушак пурăнать. Вăл Пушок ятлă. Пулă, какай тата сĕт юратса ҫиет. Ҫулла урамра иртен пуҫласа каҫченех уҫăлса ҫӳрет. Вăл хура-шурă тĕслĕ, ҫăмламас. Куҫĕсем симĕс, пысăк.

Эпĕ хамăн кĕҫĕн туссене юрататăп.

**Милена ИВАНОВА**

## Чĕрĕп тус



Ҫулла эпĕ ялта пурăнатăп. Кукампа кукаҫа пахчара пулăшатăп.

Пĕррехинче каҫхине пахчана хăяр татма тухрăм. Пĕшкĕнтĕм кăна – темле сасă илтĕнсе кайрĕ. Пуҫа ҫĕклерĕм те чĕрĕпе куртăм. Хăяр хушшинче тем шыраса ҫӳрет. Эпĕ саваннипе кукаҫ патне чупрăм.

Эпир чĕрĕпе лаççа илсе кĕтĕмĕр, сĕт ĕҫтертĕмĕр. Чĕрĕп ăна юратсах ҫирĕ. Эпир йăмăкпа ăна пĕр вăхăт сăнарăмăр та каялла пахчана кăларса ятăмăр.

**Камилла ГРИГОРЬЕВА**